хирĕçӳсем пуррине те туйнă. Çав хирĕçӳсем пирки ăнланнине пула, Бальзак хăйĕн произведенийĕсенче вулаканшăн нихçан манăçми типлă сăнарсене тĕлĕнсе каймалла ăста та тĕрĕс туса çитернĕ. Капиталистла сăхă сăнарсене çырса кăтартнă чух вара Бальзак вĕсене чĕрне хури чухлĕ те хĕрхенсе тăмасть, вĕсенчен тĕнче халăхĕ умĕнче тăрăхласа кулать, хаяррăн питлет. Нюсинжен банкире аса илĕпĕр-и, Бобсек ростовщика-и, Гранде миллионера-и, буржуази обществин карьеристне Растиньяка-и,—Бальзак çавсен кашнин вырăнне тĕрĕс кăтартса этемлĕх умĕнче вĕсем сумран та хисепрен те тухнине пĕлтерет. Вĕсен сăхă енне, этем ятне янине, тĕнчере пĕртенпĕр хăйсемшĕн çеç тăрăшса ыттисене хĕн кăтартма хăнăхнă куштансене Бальзак илемлĕ литературăн реализмла хăватлă вăйĕпе сăрласа кăтартнă. Бальзакăн реализмла енĕ мĕнле тарăн та вăйлă пулни çинчен Ф. Энгельс та пит мухтаса çырнă.

# ПЕТР ЕГОРОВИЧ ЕГОРОВ ЧĂВАШ XVII ĔМĔРТИ ТАЛАНТЛĂ АРХИТЕКТОР

Тĕне кĕмен чăваш ачи пулнă вăл. Хăш ялта çурални те, хăш çулта çурални те паллă мар-ха. Архиври документсем тăрăх, 1780 çулта çуралнă тени те пур, çав хушăрах хăй çырнисенчех 1728 çулта çуралнă тени те пур. Çамрăклах ашшĕ-амăшĕнчен уйрăлнăскер вăл, тен, хăш çулта çуралнине те пĕлмен пулĕ.

Чăваш ялĕнчен ăна Дадиани князь (грузин) Питĕр хулине илсе кайнă та, тĕне кĕртсе, хăйĕн çамрăкла вилнĕ Петр ятлă ывăлĕн ятне панă. Хăй Егор ятлă пулнипе çак усрава илнĕ ачан ашшĕ ятне те Егор тесе йышăннă. Çапла вара, ятран илсен, вăл князь ывăлĕ пек пулса кайнă. Анчах ăна никам та князь ывăлĕ пек шутламан, пур документсенче те вăл «новокрещен из чуваш» Петр Егоров тесе çырнă.

Хăш ялта çурални паллă мар-ха, терĕмĕр. Çапах та вăл Чутай, Етĕрне тăврашĕнчи чăваш ачи пулнă пулас, мĕншĕн тесен Дадианин имени-йĕсем çав тăвралла пулнă. Тен, ашшĕ-амăшĕ ăна куланайлăх укçа çуккипе пĕр 10 тенке сутса янă пулĕ. Ун пекки вăл çулсенче час-часах пулкаланă, тен, князь ăна тăлăх-туратăн хăйпе пĕрле илсе кайма кăмăл тунă. Кирек мĕнле пулсан та, унăн Питĕр хулинче, Дадиани князь патĕнче ӳсмелле пулнă. Çитĕнсе çитсен, 1755 çулта çуркунне вăл Петербургри Растрелли архитектор тытса тăнă архитектура шкулне вĕренме кĕрет. Çав шкул Петербургпа Мускав хулисене тăвакан дворец ведомствин комиссийĕ çумĕнче пулнă, урăхла каласан, патша хăй хушса ĕçлеттернĕ архитекторсен шкулĕ пулнă. Çав шкулта тăрăшса вĕренсе, Петр Егоров питĕ ăста архитектор пулса çитĕннĕ. Анчах улпут ачи пулмаскерĕн, йăхсăр-мĕнсĕр тенĕ пек «тĕне кĕнĕ чăвашăн» кун-çулĕ, паллах, ун чухне питĕ хĕсĕк пулнă. Вăл талантлă архитектор пулнине кура тăркачах унăн çулне ютран килнĕ (итальянец е нимĕç) архитекторсем пӳлсе пынă. Петр Егоров хăй те питĕ йăваш, сăпайлă ĕçчен пулнă курăнать. Вăл мухтанман, çуйхашман: портретне те пулин тупма çукха. Вăл хăй çырса тунă проектсене те час-часах пуçлăхсене алă пустарса ĕçе кĕртнĕ, хăйĕн ĕçне палăртмасăр хăварнă.

1885-мĕш çулта «Русская старина» ятлă журналта Мрамор дворец çĕр çул тултарнă ятпа (халĕ çав дворецра В. И. Ленин музейĕ) В. Орлов статья кăларнă. Çав çулах вăлах «Мраморный дворец» ятлă кĕнеке кăларнă. Вĕсенче вара çав двореца 17 çул хушши (1768—1785 çç.) тăваканни Петр Егоров архитектор пулни çинчен çырнă. Çавăн çинченех каярахпа 1905 çулхи «Художественные сокровища России» ятлă журналта (10—12 №№) А. И. Успенский çырнă. Унсăр пуçне П. Егоров ятне 1887 çулта тухнă, истори обществи кăларнă словарь валли тунă «Азбучный указательре» çакнашкал калани пур:

«Егоров Петр Егорович, хуралтсен кантурĕн архитекторĕ, 1728 çулта çуралнă. 1766 çулта Смольнăй мона-



П. Е. Егоров тунă Ленинградри çуллахи сад хӳми.

стырьне тунӑ ҫӗрте ӗҫленӗ, 1782 ҫулта Зимний Двореца хирӗҫ ларакан ҫуртсене тунӑ».

* * *

Талантлӑ архитектор Егоров ячӗ нумай пулмасть тивӗҫлипе палӑрма пуҫларӗ. Халӗ унӑн ӗҫӗсене пӗлмешкӗн эпир Ленинградпа Мускаври архивсенче тӗпчетпӗр.

П. Е. Егоров выдающийся чаплӑ архитекторӗсемпе — Баженовпа, Старовпа, Кокориновпа, Казаковпа, ҫавӑн пекех ютран чӗнсе илнӗ Ринальди, Деламот, Кваренчи пек архитекторсемпе пӗрле ӗҫленӗ. Эпир тӗпченӗ тӑрӑх, Егоров Петербургра тунӑ хуралтсем: Ҫуллахи сад хӳми, Мрамор дворецӗ, хальхи ялхуҫалӑх механизацийӗн институчӗ т. ыт. те — пӗтӗм тӗнчипе чаплӑ палӑксем. Вӗсене вӑл хӑй проектласа тутарнӑ.

1885 ҫулта В. Орлов ҫырнӑ тӑрӑх, мӗн халиччене Мрамор дворец авторӗ А. Ринальди, хуралтҫийӗ Егоров пулнӑ тесе шутланӑ. Архивра тӗрӗсленӗ тӑрӑх, Мрамор дворецӑн авторӗ Ринальди пулнӑ теме нимле сӑлтав та ҫук, ҫавӑнпа ӑна Егоров тутарни пӗр иккӗленми юлать. Тен, вӑл проектне те хӑех тунӑ пулӗ.

Хальхи литературӑра Петр Егоров Ҫуллахи садӑн проектне Ринальдипе пӗрле тунӑ тесе тата Мрамор двореца тӑвас ӗҫре Ринальдин помощникӗ пулнӑ тесе асӑннине тӗл пулатпӑр. Ҫапах та Петр Егоровичӑн ӗҫӗсене никам та тивӗҫлипе палӑртайман. Малашне эпир ун ҫинчен тӗплӗрех пӗлессе шанатпӑр.

Егоровӑн кун-ҫулӗ ҫакӑн пек пулса пынӑ. Архитектура шкулне кӗме вӑл Елизавета патшаран ыйтса ҫырнӑ. Вӑл ҫырни ҫумне отставкӑри генерал-майор Егор Леонтьевич Дадиани (1683—1765 ҫҫ.) Егоров хутне кӗрсе ҫырнӑ. Унсӑрӑн вӑл («тӗне кӗнӗ чӑваш») вӗренме те кӗреймен пулӗччӗ. Дадиани ун ҫинчен ҫапла ҫырса панӑ: Петр Егоров — чӑвашран, ҫамрӑкла тӗне кӗртнӗскер, пирӗн килте вӗренчӗ — вулать, ҫырать, арифметикӑпа геометрие пӗлет, сӑрлама та пултаркалать, вӗренме тӑрӑшать, нимле усал-тӗсел палӑртмарӗ.

Егоров Семен Волков архитектора экзамен ӑнӑҫлӑ парать. Ӑна вара ҫулталӑкне 24 тенкӗ стипенди параҫҫӗ. Вӑл вӗреннӗ чухнех Петергоф (хальхи Петродворец хулине) тунӑ ҫӗрте ӗҫлет. Ултӑ ҫул вӗренсен, Егоров шкултан тухать. 1761-мӗш ҫулта ӑна виҫҫӗмӗш класлӑ архитектор помощникӗ ятне параҫҫӗ, икӗ ҫул иртсен вӑл прапорщик ятне илет, 1765-мӗш ҫулта вӑл 1-мӗш класлӑ архитектор помощникӗ пулать, подпоручик ятне илет.

Кӑштах Егоров ҫемйи ҫинчен калар. П. Е. Егоров 35 ҫула ҫитнӗ тӗле тин авланнӑ. Унӑн арӑмӗ Анна Филипповна (1746 ҫулта ҫуралнӑскер) пулнӑ. Авланнӑ чухне П. Е. Егоров прапорщик, архитектор помощникӗ пулнӑ. 1766 ҫулта вӗсен ывӑл—Алексей ҫуралнӑ. 1781 ҫулта Алексей, ашшӗ пекех, архитектура шкулне кӗнӗ. Ашшӗ йӑлӑннине кура, Кӗтерне патшана ӑна шкула илме ирӗк панӑ. Растреллипе Фок умӗнче экзамен парса, Алексей шкула кӗнӗ. Шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Алексей ашшӗ патӗнчех архитектор помощникӗ (прапорщик) пулса ӗҫленӗ. Архивра эпир вӑл икӗ хутлӑ пысӑк ҫурт (особняк) валли хатӗрленӗ проекта тӗл пултӑмӑр. Вӑл халӗ Ленинград историн музейӗнче, ун ҫине Алексей Егоров тесе алӑ пуснӑ.

Алексейсӗр пуҫне П. Е. Егоровӑн тата икӗ ывӑл та пӗр хӗр пулнӑ: Петр, Иван тата Праски.

П. Е. Егоров юлашкинчен надворнӑй советник ятне илнӗ; ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл мӗн виличчене пӗр кун та ӗҫлемесӗр пурӑнман. Вӑл 1789 ҫулта майӑн 12(23)-мӗшӗнче, 58(61) ҫула ҫитсен вилнӗ.

# ИОСИФ ГАЙДН

**Иосиф Гайдн** — Австрин аслӑ композиторӗ. Вӑл 1732 ҫулта Рорау ятлӑ ялта ҫуралнӑ. Гайдн ҫемйи славян йӑхӗнчен тухнӑ. Ашшӗпе амӑшӗ чухӑн ҫынсем пулнӑ. Гайдн музыкӑпа чи малтан ялти учитель патӗнче вӗренсе паллашнӑ, унтан Венӑри св. Стефан соборӗн капеллинче арҫын ачасен хорӗнче юрланӑ, кунтах тӗрлӗ инструментсемпе выляма вӗреннӗ. 1749 ҫулта сасси улшӑннӑ пирки Гайдна капеллӑран кӑларса янӑ. Хӗн-хурлӑ та асаплӑ пурнӑҫа пӑхмасӑрах Гайдн музыка кӗвӗлес енӗпе тӑрӑшса ӗҫленӗ, хӑйӗн пӗлӗвне малалла ӳстернӗ. Унӑн чи малтанхи ӑста ҫырнӑ произведенийӗ «Новый хромой бес» ятлӑ музыкӑллӑ комеди пулнӑ. Музыкӑпа интересленекенсем ҫак комедие хапӑл туса кӗтсе илнӗ. Кун хыҫҫӑн Гайдн тӗрлӗ капеллӑсенче капельмейстер пулса ӗҫленӗ. Кунсӑр пуҫне вӑл симфонисем, квартетсем, тӗрлӗрен инструментсемпе ирттермелли концертсем, триосем, сонатсем, оперӑсем тата ытти произведенисем ҫырнӑ. Хӑйӗн юлашки ҫулӗсене вӑл Венӑра пурӑнса ирттернӗ, чикӗ леш енне кайса ҫӳренӗ. Англи валли Гайдн 12 симфони тата ытти тӗрлӗрен сочиненисем ҫырнӑ.



Юлашки ҫулсенче вӑл «Тӗнчене туса хунӑ», «Ҫулталӑк вӑхӑчӗсем» ятлӑ ораторисем ҫырнӑ. Гайдн творчествине Российӑра та юратнӑ. 1802 ҫулта Петербургра унӑн «Тӗнчене туса хунӑ» ятлӑ ораторине пысӑк ӑнӑҫлӑхпа лартса панӑ.

Гайдн 1809 ҫулхи майӑн 31-мӗшӗнче Венӑра вилнӗ.

Гайдн творчестви халӑх творчествипе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Унӑн чи малтанхи произведенийӗсенчех халӑх кӗввисем тарӑн йӗр хӑварнӑ. Вӑл ҫутҫанталӑка, ахаль ҫын ӗҫӗ-хӗлӗпе кулленхи пурнӑҫне сӑнласа панӑ. Унӑн произведенийӗсенче хаваслӑ шухӑш-кӑмӑл, хастарлӑх, халӑхӑн ӑшӑ кулли сисӗнет. Гайднӑн симфонийӗсемпе ораторийӗсенче халӑх юррисен илемлӗхӗпе ҫепӗҫлӗхӗ палӑрать.

Анчах та Гайдн творчествинче сиенлӗ туртӑмсем те йӗр хӑварнӑ, вӑл, сӑмахран, хресченсен йывӑр пурнӑҫне хитрелетсе кӑтартнӑ. Унӑн творчествинче аристократла шухӑшсем те палӑрнӑ.

Ҫапах та, пӗтӗмӗшле илсен, Гайдн творчестви прогрессивлӑ пулнӑ. Выдающийся аслӑ композиторӗ П. П. Чайковский ун ҫинчен ҫапла ҫырнӑ: «Гайдн пулман пулсан, Моцарт та, Бетховен та пулман пулӗччӗҫ»,— тенӗ.